# Тема: Пирĕн тăрăхри йывăççем



*Тĕллевĕ: Тăван енчи йывăçсен пĕлтерĕшĕпе паллаштарасси, вĕсене сыхлама вĕрентесси.*

# Тупмалли:

1.Ум сăмах.
2.Чăваш вăрманĕсем.
3. Вăрманти йывăçсем:

- -вĕрене
- -хыр
- -чăрăш
- -хурăн
- -шĕшкĕ
- -лиçван
- -ăвăс

4. Вăрман тăшманĕсем.
5. Сыхлавçисем.
6. Йывăçсен пĕлтерĕшĕ.
7.Пĕтĕмлетӳ.



# Ум сӑмах

Чӑваш ҫӗрӗ-шывӗ пысӑк лаптӑк йышӑнмасть пулин те, вӑл тӗрлӗ ӳсен-тӑранпа пуян. Пирӗн мӑн асаттесем куҫса киличчен кунти ҫӗрсене пӗтӗмпех чӑтлӑх вӑрмансем хупласа тӑнӑ.Халӗ вӗсем сахалланса юлнӑ, ытларах Сӑр тӑрӑхӗнче ӳсеҫҫӗ. Вӑрмансенче 70 тӗрлӗ йывӑҫпа тӗм тӗл пулать. Йӗпреҫ, Пӑрачкав, Ҫӗмӗрле районӗсенче ӑвӑс, хурӑн вӑрманӗсем, хутӑш вӑрмансем ытларах ӳсеҫҫӗ.

# Чăваш вăрманĕсем

1. Чăваш Республики вăрмансемпе пуян.
2. Ĕлĕк-авал çĕрĕн пысăк пайне вăрман йышăннă.
3. Вăрман строительство материалĕ парать.
4. Вăрман çĕр питне сырма-çатра çурса пĕтересрен хÿтĕлет, хĕвеллĕ çанталăкра кислород кăларать.
5. Чăвашра вăрман лартас енĕпе нумай тăрăшнă çынсенчен пĕри вăл - Бронислав Ильич Гузовский (1860-1914) ученăй – вăрманçă.



# Вăрманти йывăçсем.

Пирĕн вăрманта тĕрлĕрен йывăç ӳсет: вĕрене, хыр, чăрăш, хурăн, шĕшкĕ, лиçван, ăвăс, юман, çăка, пилеш, палан, хурама тата ыттисем те.



# Клён - вĕрене

Вĕрене хутăш вăрманта ÿсет. Вăл вăрăран ĕрчет. Пирĕн енче тĕрлĕ вĕрене ÿсет: шĕвĕр çулçăлли, уйри, тутар, америка вĕрени текенни. Çÿллĕш 30 метра çитет. Сивĕрен хăрамасть. Унăн тĕшши те çирĕп. Вĕренене парксенче, кÿлĕсемпе пĕвесем хĕррине лартаççĕ. Вĕрене чечекре чухне ун çине хуртсем ларaççĕ. Унăн сĕткенĕнче 2-5% сахăр пур.



# Сосна — хыр





Хырлăх та хăйне май илемлĕ. Хыр хăйăрлă, торфлă – шурлăхлă вырăнта ÿсет. Хырлăхра самай тĕттĕм. Сывлăхшăн усăллă сухăр тата хăйне евĕр çĕр шăрши сăмсана кăтăклать. Хырлăхра шăп. Хыр 100(çĕр) çул ÿсет.

# Ель — чăрăш





Чăрăш çӳллĕшĕ 20-50 метра, диаметрĕ 1 метра çитет. Ирĕкре çитĕнекен йывăç 15 çулта, куçарса лартни 25-30 çулта вăрă пама тытăнать. Йĕкелĕ 10-15 сантиметр тăршшĕ. Чăрăш тымарĕ çĕр айне тарăнах каймасть, ытларах çиелте саланать. Вăл тĕттĕмлĕхрен, сивĕрен хăрамасть,а нчах кĕркунне иртерех, çуркунне кая юлса килнĕ сивĕпе аптрама пултарать.Чăрăш 200-300 çул, хăшĕ-пĕри 500 çула çитиччен пурăнать.

Çынсемшĕн чăрăш хисеплĕ йывăç шутланать. Петĕр патша йĕркене кĕртнĕренпех çĕнĕ çула чăрăш тавра кĕтçе илес йăла çирĕп упранать. Чăрăш тавра уява пуçтарăннă ачасене Хĕл Мучипе Хĕл Пике Çĕнĕ çул парнипе сăйлаççĕ.

Чăрăш тĕшши шурă çăмăл та çемçе. Унпа стройкăра, хут тата музыка инструменчĕсем тунă çĕрте усă кураççĕ. Чăрăш сухăрĕнчен тикĕт, скипидар, канифоль, йывăç уксусĕ, тир тумалли хуйăр хатĕрлеççĕ.

# Береза-хурӑн

Хурӑн ҫулҫӑллӑ йывӑҫсен йӑхӗнчен. Унӑн ҫулҫи вӗтӗ. Хурӑн 25 метра ҫити ӳсет, диаметрӗ 80 сантиметр таран пулать. Вӑл тӗрлӗ минераллӑ тӑварпа пуян. 150 (ҫӗр аллӑ) ҫул пурӑнать, хутӑш вӑрманта ӳсет. Хурӑна хитришӗн аслӑ ҫул хӗррине лартаҫҫӗ. Шупашкар – Канаш автомобиль ҫулӗпе чукун ҫула та хурӑн илем кӳрет.

Хурӑн папкинче 3,5-6 процент яхӑн эфир ҫӑвӗсем. Папкине вӗретнӗ шывпа пӗвер чирӗсенчен, шӑмӑ сыппisем ыратнинчен сипленеҫҫӗ. Хурӑн хуппинчен карҫинкка ҫыхаҫҫӗ, тикӗт юхтараҫҫӗ. Хурӑнран сӗтел-пукан, фанера, паркет тӑваҫҫӗ.



# Орешник — шĕшкĕ





Шĕшкĕ хутăш вăрманта та, кил-çурт таврашĕнче те ÿсет. Çулçи сарлака, çемçе тĕклĕ. Чечекки-курланкăра. Çимĕçĕ те унтах  ÿссе çитĕнет.Вăл хытă хупăллă.Шĕшкĕ вăрăран,мăйăртан, хунав тухса  ĕрчет.Вăл вунă-вуникĕ çултан ытла пурăнмасть, хăвăрт çĕрет.

# Лиственница - лиçван





Лиçван-хыр-чăрăш йăхĕнчи йывăç. Пирĕн тăрăхра вăл ятарласа лартнипе çитĕнет. Республикăра ăна лартасси 50-60-мĕш çулсенче анлă сарăлнăччĕ.

Лиçван йывăçĕ лайăх авăнать, çирĕп, хытă, час çĕрмест. Унпа шыв айĕнчи сооруженисем, карап тума усă кураççĕ, сĕтел-пукан ăсталаççĕ.

# Осина-ăвăс

Ăвăс вăрмансенче анлă сарăлнă йывăç. Вăл яштака та çӳллĕ. Вăл хăвăрт ӳсекен йывăç. Вăл çулçисем тухиччен чечеке ларать. Ăвăс 35 метр çӳллĕш ӳсет. 80-100 çул пурăнать. Вăл пахчасенче те хăвăрт ĕрчет. Унăн çулçисем çутă хăмăр, хура хĕрлĕ пулаççĕ. Ăвăсран валашка, вите (хлев), ещчĕк тунă.



# Вăрман тăшманĕсем



Вăрмана пăхса тăмасан тĕрлĕ хурт-кăпшанкă, чир-чĕр хытă хавшатать.

Пăшисем те çамрăк йывăçсене сахал мар пĕтерессĕ.

Вăрманăн тепĕр хăрушă тăшманĕ вăл - пушар. Чăваш вăрманне 27 пушар станцийĕ сыхлать. 1972 (пин те тăхăр çĕр çитмĕл иккĕмĕш çулта) пушар 47пин гектар лаптăка сиен кÿнĕ, çав шутран 34пин гектар -Улатăрпа Йĕпреç тăрăхĕнче.



Туристсем, çынсем вăрмана вараласа хăвараççĕ, кирлĕ мар банкăсем пăрахса хăвараççĕ, йывăççене касаççĕ, сăтăр тăваççĕ.

Чĕрĕ йывăçа каснăшăн штраф тÿлеттерессĕ (пĕр йывăçшăн 150 пинрен пуçласа 200 пин тенкĕ таран).

# Сыхлавçисем

Чăваш республикинче 17 лесхоз, 70 лесничество.

Пирĕн çĕнĕрен йывăçсем лартсах тăмалла, сыхламалла, упрамалла.

Вăрмана хурт-кăпшанкăсенчен, пушартан, сиен тăвакансенчен сыхламалла.

Вăрман вăл-пирĕн пурлăх.



# Йывăççен пĕлтерĕшĕ

Вăрман этеме мĕнле кăна ырлăх памасть пуль! Вутă çунтарса пӳрте ăшăтаççĕ. Йывăçран хут-кăранташ, сĕтел-пукан, пӳрт-çурт, паркет тăваççĕ. Кашни йывăç хăйне майлă сиплĕ, усăллă. Унпа медицинăра та усă кураççĕ. Вăл сывлăша та тасатать, кирлĕ строительство материалĕ парать.



# Пĕтĕмлетӳ

Çапла вара, вăрман халăха темĕн чухлĕ усă кӳрет. Çавăнпа пирĕн вăрмана пăхса ӳстермелле, унпа тирпейлĕ усă курмалла. Пысăк йывăç пĕчĕккинчен ӳссе çитĕнет, çавăнпа çамрăк йывăççене касса пăрахма юрамасть.

Вăрман вăл – çĕр-шыв илемĕ.

